Ял çыннин пурнăçĕнчи пĕр ӳкерчĕк

# Сĕт хакĕ хресчене татах ура хурĕ-ши?



Ял çыннин ирхи пĕрремĕш ĕçĕ – ĕне сăвасси те сĕте вырнаçтарасси.



В.Л. Охотникова ĕçе кайиччен ял çыннисен сĕтне пуçтарать.

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Ыйтусем çуралаççĕ: «Сĕт хакĕ хресчене татах нумай такăнтарĕ-ши?» Хуравĕ çук. «Кашни ĕне сĕчĕн хăйĕн çу виçи. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем ăна кура укçа илеççĕ пулсан, ял çыннин килти хушма хуçалăхĕнчен тухакан сĕтре çу виçи 3 процент-и вăл е 5 – хакĕ пурин те пĕр пек. Тĕрĕс-и çакă?» Ял çынни майлă хурав каллех çук. Ял çыннинчен пысăкрах çу хисепĕллĕ сĕте пуçтарса тирпейленĕ хыççăн илемлĕ пакетсенче çу хисепĕпе 2,5 тата 3,2 процента юлнă сĕте магазин сентрисем çинче 24 – 33 тенкĕпе тĕл пулатăн та макăрса ярасла тĕлĕнетĕн. Çакă-и-ха вăл «АПК-на аталантарасси» наци проекчĕ? Вăл малалла аталанма пулăшать тесе ялта иртен пуçласа тепĕр ирччен – тăвансем патне çĕр выртмалла хăнана каяймасăр – ĕçлетпĕр, выльăх-чĕрлĕх ĕрчететпĕр.

Уяр кунăн кашни сехечĕпе туллин усă курса районта паян вырма ĕçĕсем вăй илсе пыраççĕ. Хресченĕн е ял çыннин ку вăхăтри пурнăçне ума кăларас пулсан тĕлĕнсе каймалла: епле чăтать-ши вăл, пурнăç утăмĕнчен юлмасăр мĕнле утайрать-ши тата ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсем сахалланни çак ыйтусенчен тухса тăмасть-ши?

*5 сехет.* Ял çынни ура çинче, сĕт витри йăтнă та ĕне вити еннелле утать. Нумай та вăхăт иртмест, вăл каçхи-ирхи сĕт тултарнă тулли витресемпе сĕт пуçтаракан патне çул тытать. 8 кг, 17 кг, 23 кг... Пĕр ĕне тытаканăн сĕчĕ те сахалрах, икĕ ĕне усраканăн производстви те пуянрах. Йăлтах лайăх темелле, анчах... Эрнере 100 килограмм рăхĕсен пуçлăхĕсен тата вырăнти ытти специалистсен тимсĕрлĕхне пула ял çынни çав çăмăллăхпа усă курайкмасть-ха. Çăмăллăхсем тенĕрен, вĕсем элитăллă вăрлăхпа усă курнăшăн та, ăратлă выльăхсемпе ĕçленĕшĕн те пур, анчах ял çынни çуркунне çитсен пысăк пахалăхлă çĕр улми лартса уншăн субсиди илни ялта пулнă-и, ăратлă ĕне туянса талăкри вăтам сăвăма 7-8 килограмран ӳстернине курнă-и? Паллах, çук. Питĕ шел. Ку çулпа кайсан ял çыннин производстви татах ӳсесси никама та иккĕлентермест, анчах...

Çулталăк хушшинче районти аграрисем măйракаллă шултра выльăхсен йышне пĕтĕмпе 20858 пуçран 19168 пуçа хăварнă. Вăл шутра ял хуçалăх предприятийĕсенче 7953-рен 6462-не, килти хушма хуçалăхсенче 12799-тан 12644-на.

Ĕнесем тĕлĕшпе уйрăммăн пăхсассăн та лару-тăру са-



«Канистрти сĕте кутамккапа йăтма çăмăлрах та меллĕрех», – тет Кашмашри Г. Майоров.



М. Иванова талăкри сăвăмпа кăсăкланать.

паха сĕт паракан тепĕр эрнерен çавăншăн 500 тенкĕ укçа илни кулăшла мар-и? Кулăшла, анчах ял çынни кулмасть: сĕт памалла та часрах хире ĕçе васкамалла.

Районти сĕтĕн 76 процентне килти хушма хуçалăхсем туса илеççĕ пулсан та, вĕсем патшалăх енчен пулăшма палăртнă майсемпе туллин усă кураççĕ-и-ха? Хуравĕ каллех ял çыннисем майлă мар. Хресчене патшалăх енчен пулăшма палăртнă майсенчен пĕри вăл – ĕнесене пĕтĕлентерме тухнă тăкака субсиди парса саплаштарасси. Ку йĕркепе 100 тенкĕ тăкакшăн 70 тенкине ĕне хуçине тавăрса памалла. Ял тăвăнмаллиех мар. **Çулталăк хушшинче ĕнесен йышĕ районта 1690 пуç чакнă. Вăл шутран пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче – 583 пуç, килти хушма хуçалăхсенче – 315 пуç.**

Паянхи сăн ӳкерчĕксенче эсир Кашмашра сĕт пуçтарнине тата район çыннисем сĕт-çăва пасарта сутнине, хăймине уйăрса илнĕ сĕт магазин сентри çинче мĕн хакпа выртнине куратăр.

– Сĕт хакĕ чакса кайнăран ял çынни те ĕнесем тытма пăрахса пырать. 10 çул каяллла кăна ял кĕтĕвĕнче 108 ĕне çӳретчĕ пулсан, иртнĕ касура 68 ĕне кăна пăхрăмăр. Паллах, чылайăшĕ ĕнисене уличчере çӳретеççĕ пулсан та, ялта ĕне усрама пăрахакансем куç умĕнчех. Акă пĕлтĕр ялта тăватă вырăнта сĕт пуçтарнăччĕ, кăçал виçĕ вырăн çеç юлчĕ, – терĕ 29 çул ача садĕнче воспитательре ĕçленĕ, паян воспитатель пулăшаканĕнче вăй хуракан тата кăçалхи апрель вĕçĕнченпе кашни ир халăхран сĕт пуçтаракан Валентина Леонидовна Охотникова. Куллен кунта 24 çын сĕт леçет. Халăхран пуçтарнă сĕт кунсерен 250-350 килограмм Муркашри сĕт заводне каять. Сĕт уйрăмах нумай сутакансем хушшинче Юлия Пугачева, Нина Чаплина, Ираида Белова, Светлана Анисимова.

*...21 сехет.* Хăнана кайма хыпаланса ял хĕрарăмĕ ĕне суса кĕчĕ. Сĕтне сĕрсе холодильника лартрĕ те тăхăнсатумланса уй урлă хăнана тухса утрĕ. Ыйхă каллех катăк пулать та-ха...

Магазинри пĕр литр минерал шывĕ сĕтрен 3 хут хаклăрах тăни, сĕрмелли-çунтармалли материалсен хакĕсем вара 5 хут пысăкрах пулни ял хуçалăхне, хресчене тĕкĕ парайратех-ши? Иккĕленмелле, анчах пурнăçра çапла пулса пырать...

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



Чамăшран ĕне çăвĕпе (çур литр кĕленчи 45-50 тенкĕ) килнĕ Р. Филипповапа Шаптак Муркашран пасара сĕт сутма (1,5 литр кĕленчи 25 тенкĕ) тухнă Р. Смирнова.




Сĕт хакĕсем магазин сентрисем çинче ялтинчен 5-6 хут пысăкрах.




Минераллă шывăн 1 литрĕ – 15 тенкĕ.




Сĕтри çу хисепĕ 3,2 процентлă пĕр литр продукци магазинта – 33 тенкĕ.



Ĕне кĕтĕвĕ унта та кунта пĕчĕкленсех пырать. Хĕрлĕ кĕнекене кĕмеллех пулмĕ-ши?

## Официально

**МОРГАУШСКОЕ РАЙОННОЕ СОБРАНИЕ ДЕПУТАТОВ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ**
**РЕШЕНИЕ**

**11.06.2008 г.** **№ С-26/11**

**О внесении изменений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 15 февраля 2008 г. №С-24/3 «О прогнозном плане (программе) приватизации муниципального имущества Моргаушского района на 2008 год»**

В соответствии со ст. 4 Федерального закона от 21.12.2001 г. №178 –ФЗ « О приватизации государственного и муниципального имущества», ст. 51 Федерального закона Российской Федерации от 06.10.2003 г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 50 Устава Моргаушского района Чувашской Республики

1. Внести в решение Моргаушского районного собрания депутатов от 15 февраля 2008 г. №С-24/3 «О прогнозном плане (программе) приватизации муниципального имущества Моргаушского района на 2008 год» следующие изменения:

В разделе II добавить подпункт 3 следующего содержания:

| | Наименование объекта | Адрес | Литер | Дата ввода в эксплуатацию | Этажность | Общая площадь объекта недвижимости (кв. м.) | Срок приватизации |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | Здание школы на 100 мест | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, с. Чемеево, ул. Центральная, д. 4 | Б б1 б2 б3 | 01.01.1991 | 1 | 304,7 | 3-4 кварталы 2008 г. |
| 2 | Здание школы №1 | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, с. Чемеево, ул. Центральная, д. 4 | А а1 | 01.01.1964 | 1 | 491,4 | 3-4 кварталы 2008 г. |
| | Топочная | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, с. Чемеево, ул. Центральная, д. 4 | В | 01.01.1991 | 1 | 19,9 | 3-4 кварталы 2008 г. |

2. Настоящее решение вступает в силу с момента опубликования в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

3. Контроль за исполнением настоящего решения возложить на постоянную комиссию Моргаушского районного Собрания депутатов по бюджету, финансам, экономической деятельности, налогам и сборам и отдел имущественных и земельных отношений администрации района.

**Глава Моргаушского района Ю.А. ИВАНОВ.**

## Фермăсем хĕле хатĕрленеççĕ

# Кĕр çитрĕ, хĕл те çывхарать

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем тăрăшсах вырма ĕçĕсене кая хăварас мар тесе тимленĕ вăхăтра ыранхи куна пăхакан хресчен выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлесси çинче те алă сулмасть, сивĕсем çитмен-ха тесе ку ĕçе ырана хăвармасть. Раççейре «АПКна аталантарасси» нацпроект ĕçленĕ вăхăтра çапла пулмалла та. Выльăх-чĕрлĕхе аталантарсан производство ӳсет, хуçалăх экономики вăйланать, малашлăх чиккисем уçăлаççĕ. Анчах пурте çак çул çине тĕрĕс пăхаççĕ-и-ха? Ку ыйту çине хурав пама вара чылай йывăртарах.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕн аталанăвĕ – кашни хуçалăх экономикине тĕреклетмелли çул-йĕр. Юлашки вăхăтра çĕршыв ял хуçалăхне аталантарасси çине çаврăнса пăхни выльăх-чĕрлĕх отраслĕ çине тимлĕрех пăхма ыйтма пуçларĕ. Малалла пăхакан хуçалăхсем çапла тăваççĕ те. Çитес хĕл кунĕсенче выльăхсен йышне тивĕçлĕ шайра сыхласа хăварасси тата продукци илессине тивĕçлĕ шайра тытасси – вĕсен паянхи тĕп тĕллевĕ.

Ĕнесене хĕллехи тапхăрта тытма фермăсене юсанипе-шуратнипе-дезинфекциленипе пĕрлех çак вăхăтчен вĕсене çĕпĕр язвинчен, ЭмКАРтан, нăрăран вакцинăлани, туберкулезран тата бруцеллезпа лейкозран тĕрĕслени хĕл кунĕсенче сывă выльăх продукчĕсемпе усă курма май парать. Çак ĕçсем нихăшĕ те кая хăвармаллисем мар.

Хальлĕхе фермăсенче юсав, дезинфекци тата сарайсене шуратас ĕçсем пыраççĕ. Сарайсене юсассипе нумайăшĕ çанă тавăрсах ĕçлет пулсан, К. Иванов яч.хис., «Хлебороб», «Рассвет» хуçалăхсенче выльăхсене витĕр çил вĕрекен сарайсенчех хĕл каçарас теççĕ пулас – ĕçлени курăнмасть. Çав вăхăтрах «Свобода», «Ударник» хуçалăхсенче çĕнĕ сарайсем хута ярассипе ĕççем пыраççĕ. Юсавсем ирттернĕ чылай сарайсенче дезинфекци ĕçĕсем те пурнăçланă ĕнтĕ. Ку лайăх-ха, анчах фермăсене хĕле хатĕрлессипе ĕçлемелли татах чылай.

**А. ПЕТРОВ.**